27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
12
ЮНКУН
73(6568) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, наступление куçса, тăшманăн ПЕРЕКОП перешеекĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татнă та АРМЯНСК хулине туртса илнĕ, унтан, 20 километр таран малалла куçса, ИШУНЬРИ позицисем патне пырса тухнă. Çав вăхăтрах фронт çарĕсем, АРМЯНСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре СИВАШ урлă каçнă та СИВАШĂН кăнтăр çыранĕнчи кӳлĕллĕ вырăнти нумай шала каякан оборонăна татнă, вара, тăватă кун хушши пынă çапăçусенче 60 километр таран малалла куçса, Крымăн ДЖАНКОЙ ятлă питĕ паха чугун çул узелне туртса илнĕ.

Çапăçусенче ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал-лейтенантăн, КОЛОМИЕЦ генерал-лейтенантăн, НЕВЕРОВ генерал-майорăн, ЛОВЯГИН генерал-майорăн, КОШЕВОЙ генерал-майорăн, ЦАЛИКОВ генерал-майорăн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорăн, СТАНКЕВСКИЙ генерал-майорăн, БОБРАКОВ генерал-майорăн, ИВАНОВ полковникăн, ТОЛСТОВ полковникăн, ВОЛОСАТЫХ полковникăн, МАЛЮКОВ полковникăн çарĕсем; ПОЦЕЛУЕВ полковникăн, БАРАБАШ подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВĂН, артиллери генерал-полковникĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ГАПОНОВĂН, ВАСИЛЕНКО полковникăн, ПАВЛОВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ФИЛИНĂН, авиаци генерал-майорĕн САВИЦКИН, ПРУТКОВ полковникăн, ГЕЙБО полковникăн летчикĕсем тата инженерла çарсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВĂН, инженерла çарсен генерал-майорĕн БАЖЕНОВĂН саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ПЕРЕКОПСКИ», «СИВАШСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда́лама тăратас.

Паян, апрелĕн 11-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, тăшманăн ПЕРЕКОПРИ тата СИВАШРИ оборонине татса ДЖАНКОЙ чугун çул узелне туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, тăшман оборонине татнă çĕрте пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА

ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем, наступление куçса, тăшман оборонин Керчь çурутравĕ енчи вăйлă тĕреклетнĕ пунктне татса кĕнĕ те паян, апрелĕн 11-мĕшĕнче, нимĕçсен оборонин Крымăн Хĕвелтухăçĕнчи питех те паха тĕреклĕ пунктне—КЕРЧЬ хулипе крепоçне—туртса илнĕ, Керчьрен хĕвеланăçнелле малалла 30 километра çити куçнă.

Тăшман оборонине татса кĕрессишĕн тата КЕРЧЬ хулипе крепоçне туртса илессишĕн пынă çапăçусенче РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВĂН артиллерисчĕсем; ДЕРГУНОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКĂН летчикĕсем; инженерла çарсен генерал-майорĕн ПИЛИПЕЦĂН саперĕсем тата ГОРШКОВ контр-адмиралăн, ЯБЛОНСКИЙ подполковникăн морякĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас шутпа, тăшман оборонине татса кĕрессишĕн тата КЕРЧЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «КЕРЧЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда́лама тăратас.

Паян, апрелĕн 11-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, тăшман оборонине татса кĕрсе КЕРЧЬ хулипе крепоçне ирĕке кăларнă ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, тăшман оборонине татса кĕрсе КЕРЧЬ хулине ирĕне кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕ.

„Çĕнтерӳ" орденĕн кавалерĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. ЖУКОВ.

„Çĕнтерӳ" орденĕн кавалерĕ Совет Союзĕн Маршалĕ А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Совет Союзĕн Маршалне Г. К. ЖУКОВА „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăласси çинчен

Пысăк боевой операцисене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнăй Командовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çавсене пула фашистла нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас ĕçре питех те паллă çитĕнӳсем тунăшăн наградăлас:

«ÇĔНТЕРӲ» ОРДЕНĔПЕ

Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович Жукова.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Совет Союзĕн Маршалне А. М. ВАСИЛЕВСКИЕ „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăласси çинчен

Пысăк боевой операцисене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнăй Командовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çавсене пула фашистла нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас ĕçре питех те паллă çитĕнӳсем тунăшăн наградăлас:

«ÇĔНТЕРӲ» ОРДЕНĔПЕ

Совет Союзĕн Маршалне Александр Михайлович Василевские.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕ.

ОДЕССА—ПИРĔН!

Украинăри 3-мĕш фронт, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС корреспонденчĕ). Паттăр Одесса 1941 çулта нимĕçсемпе румынсен йышлă кĕтĕвĕсене хирĕç 69 кун хушши кĕрешнĕ. Çав 69 кун Аслă отечественнăй вăрçăн историне уçăмлă та хумхантаракан страница пулса кĕрсе юлĕç. Одессăна хӳтĕлекенсен çав тери чаплă паттăрлăхĕпе тата хастарлăхĕпе ун чухне пĕтĕм тĕнче саванса тăчĕ. Одесса çывăхĕнче нимĕçсемпе румынсен 250 пин салтакпа офицер пĕтнĕ.

Унтанпа икĕ çул çурра яхăн иртрĕ. Акă ĕнтĕ тăшман ишĕлтернĕ Одесса каллех артиллери сассине илтме пуçланă. Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынă. Одессăна унăн чăн-чăн хуçисем, унăн юратнă ывăлĕсем, ăна хӳтĕлекенсем таврăннă.

Нимĕçсем тинĕс хĕрринчи вырăнсене çирĕплетессишĕн сахал мар тăрăшнă. Унта пурăнакансем каласа панă тăрăх, иртнĕ çулхи кĕркуннерен пуçласа унта пĕрмаях оборона ĕçĕсене тунă: окопсемпе траншейăсем чавнă, йĕплĕ пралуксем карнă, минăсем лартнă. Хура тинĕс хĕрринчи Очаков хулине тата халăх пурăнакан ытти вырăнсене нимĕçсем крепоçсем туса хунă. Нимĕçсене лайăх çирĕпленсе ларма лимансем çывăхĕнчи вырăн тикĕс пулманни те чылаях пулăшнă.

Анчах та пирĕн çарсем хăвăртăн наступлени туса пыни, совет подразделенийĕсем хăюллăн маневрсем туни тата тинĕсрен те, типĕ çĕр çинчен те пĕр вăхăтрах пыра-пыра çапни тăшман аллинчи мĕнпур лайăх майсене пĕтерсе лартнă.

Тăшман хăй умне пысăк хăрушлăх тухса тănине туйса, наступлени туса пыракансене хирĕç авиацин пысăк вăйĕсене янă. Тăшманăн бомбардировщикĕсем çирĕмĕн-вăтăрăн татти-сыпписĕрех пирĕн çарсене тапăннă. Çапла вĕсем пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен отрядсене малалла кайма чарасшăн пулнă. Анчах ун пек туни усăсăр пулнă. Çапăçусенче пиçĕхнĕ совет чаçĕсем наступление хăвăртлатнăçемĕн хăвăртлатса пынă.

Совет çарĕсем нумай асап тӳснĕ Одесса патне никам тытса чарайми вăйпа çĕмĕрсе пынă. Боецсемпе офицерсенчен нумайăшĕ çав çулсемпе иккĕмĕш хут пынă. Икĕ çул çурă каялла вăл çулсем пирĕн боецсемпе офицерсемшĕн каялла чакмалли çулсем пулнă. Совет воинĕсем Одессăран тухса кайнă чухне унта çĕнĕрен çĕнтерӳсем пулса пырасси пирки пĕр минутлăха та иккĕленмен.

Тилигульти çирĕплетнĕ вырăнта, Хура тинĕс хĕрринчен пуçласа Лиман тăрăх тата Тилигуль шывĕ тăрăх пыракан рубежра (Хĕвеланăç енче унта чылай çӳллĕ вырăнсем пур) нимĕçсем Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсене малалла куçса пыма тепĕр хут чăрмантарма пикеннĕ. Нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем каласа панă тăрăх, тăшман çав вырăнта хăйĕн кавшанă чаçĕсене йĕркене кĕртсе, вĕсемпе Одессăна сыхлама шутланă. Çакăн пек туни те, Чичеклей патĕнчи пекех, путланса ларнă. Çĕрле пирĕн утлă соединенисемпе механизированнăй соединенисем тата пехота юхан шыв урлă каçнă та вирлĕн пырса çапса Раздельная хулипе пысăк чугун çул узелне — нимĕçсен Одесса патне каймалли çулсем çинчи вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—йышăннă. Çапла вара тăшманăн Одессăри ушкăнĕн Румыние каймалли çулĕсене татнă.

Çакăн хыççăн Одессăшăн пыракан кĕрешӳвĕн юлашки тапхăрĕ пуçланнă. Нимĕçсем Куяльник тата Хаджибей лиманĕсем çывăхĕнче малтанах хатĕрлесе хунă оборона тăрăхĕнче тытăнса тăма тата çав вăхăтра пысăк вăйсемпе Тирасполь патнелле чакса тухма тăрăшнă. Вĕсем Раздельная хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта пысăк вăйсем пухнă та, пирĕн малта пыракан чаçсене атакăласа, кăштах хĕсме пултарнă. Нимĕçсен командованийĕ çакна умкăран татса тухни вырăнпе шутланă та унта пехотăн пысăк вăйĕсене, нумай танксемпе артиллерине тата обозĕсене янă. Тăшман Кучурган шывĕ урлă каçмалли вырăнсем патне çитме пултарнă, унта вара ăна совет çарĕсем хĕстерсе лартнă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Виçĕ кун хушшинче пирĕн чаçсем темиçе пин гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата тыткăна нумай илнĕ. Çапăçу пынă вырăнти ялсемпе хуторсем патĕнче тăшман салтакĕсен виллисем тата çĕмĕрсе тăкнă техника сапаланса выртнă. Наступлени туса пыракансен аллине йышлă трофейăсем лекнĕ. Одесса группировкин чылай пысăк пайĕ çавăн пек пĕтсе ларнă вара. Унăн тепĕр пайне пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем хăваласа пынă. Хăвăрттăн куçса çӳрекен ушкăнсем, Раздельная хулинче тытăнса тăмасăрах, Кучурган лиманĕн çӳлти тăрăхне тухнă та татăклăнах кăнтăралла çавăрăнса, Днестр шывĕ патне, унтан унăн хĕвелтухăç енчи çыранĕ тăрăх аналалла кайма пуçланă. Унтан утлă çарсемпе танкистсем хăйсем куçса пынă майăх Одесса облаçĕнчи район центрне Беляевкăна тата Днестр шывĕ çывăхĕнчи чылай ялсене йышăннă. Çав вăхăтра çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен наступлени туса пыракан совет чаçĕсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, Куяльник тата Хаджибей лиманĕсем хĕррипе Одесса патнелле куçса пынă. Наступленин хăватлă хумĕ Одесса хулин стенисем патне çывăхарса пынă.

Тыткăна лекнĕ гитлеровецсем хулана хӳтĕлеме хăйне уйрăм чаçсем туни çинчен каласа параççĕ. Вăл чаçсене кирек мĕнле пулсан та Хĕрлĕ Çара хула çывăхĕнче чарса лартма хушнă пулнă. Хула хĕрринчи вырăнсене тата нумай çуртсене чылай вăхăт хушши тытăнса тăма кирлĕ пек çирĕплетсе хунă пулнă.

Тăшман артиллерипе миномётсенчен вăйлăн персе тăнă, çав вăхăтрах унăн пехотипе танкĕсем тăтăшах контратакăсем тунă. Çанталăк лайăхлансан, авиацийĕ те хăйĕн ĕçĕсене вăйлатнă.

Одессăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри участокра, тăшман аллинче лайăх позицисем пулнă вырăнта, уйрăмах хаяр çапăçусем пынă. Тинĕспе Куяльник лиманĕ хушшинчи участока питех те нумай укрепленисем тата дотсем туса тултарнă. Куяльникпа Хаджибей лиманĕсен хĕррисене те, çавăн пекех Одесса патне çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен пыракан çулсене те, вăйлăн çирĕплетнĕ.

Пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене аркаты-аркатă пынă, чылайăшĕсенчен ăста маневрсем туса ирте-ирте кайнă, вĕсен гарнизонĕсене аякран пыра-пыра çапнă, çапла пĕрмаях малалла кайнă. Хура тинĕс хĕррипе наступлени туса пыракан совет чаçĕсем апрелĕн 8-мĕшĕнче тинĕспе лиман хушшинчи участокри Гильдендорф тата Фонтанка ялĕсене, çавăн пекех Днестрпа Хаджибей лиманĕ хушшинчи ытти чылай ялсене йышăннă. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна яхăн тата нумай техникине пĕтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ, тыткăна илнĕ. Совет çарĕсем, Хура тинĕс хĕрринчен Днестр лиманĕ патне çити анлă фронтпа куçса пырса, тăшманăн Одесса таврашĕнчи группировкине тинĕс патнелле хĕстерсе пынă. Апрелĕн 9-мĕшĕ вĕçленнĕ вăхăтра Цветаев генерал-полковникăн боецĕсем, тăшманăн Куяльник лиманĕпе тинĕс хушшинчи участокĕнчи оборонине татса кĕрсе, Одессăн çурçĕр-хĕвелтухăç хĕрринче тухнă. Çапла вара пирĕн чаçсем Одесса патĕнчен тухса каймалли вырăна артиллерирен персе тăма май илнĕ. Çав вăхăт тĕлнех Хаджибей лиманĕн хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан тепĕр соединени чаçĕсем Гниляково ялне тата Дачная станцине тытса илнĕ те, нимĕçсем хирĕç тăнине аркатса тăкса, Одесса патне çурçĕр-хĕвеланăç енчен пырса тухнă.

Паян пехота тата утлă соединенисемпе механизированнăй соединенисем тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе тата фронтран атакăласа, Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем хамăр çĕршывăн хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен паха центрне, Украинăри область хулине, Хура тинĕс çинчи питех те чаплă порта—Одессăна—нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне, Румынин центрти районĕсем патнелле каймалли çулсене пӳлсе тăракаскерне, туртса илнĕ.

И. ЛАПОНОГОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем СКАЛА хулинчен хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă.

Румынире БОТОШАНИ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем СЕРЕТ шывĕпе СУЧАВА шывĕ урлă каçнă та РЭДЭУЦИ, СОЛЬКА, СУЧАВА хулисене, ДЕРМЕНЕШТИ, ВЕРЕШТИ, ДОЛГАСКА чугун çул узелĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ГОРОДКИНУЛ, МАРДЗИНА, БУРЛА, АРБОРА, БОТУШАНА, ОБЕР ПЕРТЕШТЕ, ИЛИСЕШТИ, ДРАГОЖЕШТИ, ХОРОДНИЧЕНЬ, БОССАНЧЕ, ЛИТЕНИ ятлă пысăк ялсем тата РЕУСЕНИ, БУРДУЖЕНИ, МИЛЕШОУЦ, БАЙА, СУЧАВА, КИКШАНЬ, ЛИТЕНИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЯССЫ хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ТЫРГУ-ФРУМОС хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—КРИСТЕШТИ, ВУЛТУРУЛ (ЯССЫ хулинчен 8 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ГОЕШТИ ялĕсем.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем паян, апрелĕн 10-мĕшĕнче, пехота тата утлă соединенисемпе механизированнăй соединенисем тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе тата фронтран атакăласа, хамăр çĕршывăн хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи паха центрне, Украинăри область хулине, Хура тинĕс çинчи питех те паха порта — ОДЕССĂНА туртса илнĕ. ОДЕССА вăл нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă, вăл Румынин центрти районĕсем патнелла каймалли çулсене картласа тăнă. Пирĕн çарсем тата тăшманпа çапăçса ЗАСТАВА, ДАЛЬНИК, ТАТАРКА, ЧУБАЕВКА, ДМИТРИЕВКА, СУХОЙ ЛИМАН, НЕЙБУРГ, ФРАНЦФЕЛЬД, АЛЕКСАНДРОГИЛЬФ ялĕсене йышăннă.

Çак кунсенче УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем арми генералĕ ТОЛБУХИН командир пулса ертсе пынипе ПЕРЕКОП перешеекĕпе СИВАШĂН кăнтăр çыраннĕнче тăракан фашистла нимĕç çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Пирĕн çарсем тăшманăн ПЕРЕКОП перешеекĕнчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та 20 километр таран малалла кайнă, АРМЯНСК хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ЩЕМИЛОВКА, КУЛА, НОВЫЙ ЧУВАШ, КАРАДЖАНАЙ, СТАРЫЙ ЧУВАШ, ДЖУЛГА, ДЕДЕ, КУРАЕВКА, ФИЛАТОВКА, 1-МĔШ КАРТ-КАЗАН, БУДАНОВКА, ПЯТИХАТКА, КАРПОВА БАЛКА, ЧУРЮК, 3-МĔШ КАРТ-КАЗАН, ТИХОНОВКА ялĕсене йышăннă та тăшманăн ИШУНЬРИ позицийĕсем патне тухнă. Çакăнпа пĕр вăхăтра пирĕн çарсем АРМЯНСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре СИВАШ урлă каçнă та СИВАШĂН кăнтăр çыранĕнчи кӳлĕллĕ вырăнсенчи тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, УРЖИН, АШКАДАН, БИЮК КИЯТ, ТЮЙТЮБЕ, КАРАНКИ, АСС-НАЙМАН, ТОМАШЕВКА, 1-МĔШ ПАСУРМАН ялĕсене туртса илнĕ. Икĕ кун хушши вăйлă çапăçса, пирĕн çарсем тăшманăн 5.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 44 танк, 21 самолет пĕтерсе тăкнă тата çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 91, миномётсем—54, пулеметсем—337, винтовкăсемпе автоматсем—2.686. Тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 95 танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Скала хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем кун касиччен гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн тепĕр соединенин боецĕсем тăшманăн умлă-хыçлăн тунă сакăр контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 32 танкне, 20 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă тата 700 нимĕçе çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Румынире пирĕн çарсем Ботошани хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Серет шывĕ урлă каçнă та хаяр çапăçусем хыççăн тăшманăн çав шывăн сылтăм хĕрринче туса хунă оборона тăрăхне çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн çарсем, хĕвеланăçнелле çав тери хăвăрт куçса пырса, пĕр чарăнса тăмасăр Сучава шывĕ урлă каçнă та, тăшманпа çапăçса, Рэдэуци хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Кун хыççăн совет чаçĕсем Солька хулипе Сучава хулин гарнизонĕсене аркатса тăкнă тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Малалла хăвăрт куçса пырса, совет чаçĕсем Хĕвелтухăç Карпачĕсем умне çитсе тухнă. Çапăçусенче совет чаçĕсем тăшмана пысăк сухатусем кӳреççĕ. Пирĕн пĕр соединени икĕ кун хушшинче нимĕçсемпе румынсен 1.500 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 37 тупă, 19 миномет, 5 боеприпас склачĕ, 2 горючи склачĕ, 4 апат-çимĕç склачĕ, паровозсем, вагонсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 600 нимĕçпе румына ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем паян ирхине Одесса хулине туртса илнĕ. Çак çĕнĕ çĕнтерӳре Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем хăйсен вăрçăри мастерлăхĕпе хастарлăхне, паттăрлăхне тата тепĕр хут кăтартнă. Одесса патнелле пымалли вырăнсенче тăшманăн питĕ лайăх позицисем пулнă. Одесса хулине хĕвелтухăçпе çурçĕр енчен залив, лимансем, темĕн чухлĕ сырма-çатрасем пӳлсе тăнă. Одесса заливĕпе Куяльник тата Хаджибей лиманĕсем хушшинчи ансăр перешеека нимĕçсем оборонăн вăйлă по-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

зинейĕ туса хунă, вĕсем унта танксене чăрмантармалли шăтăксем, хаетсем нумай тата тутарнă. Темен чухлĕ минăсем лартса тухнă тата пралук карса пĕтернĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем калаçса кăтартнă тăрăх, нимĕçсен командованийĕ Сортировочная станцийĕпе Солдатская Слобода тата Пересыпь ялĕсем Одессăн [illegible] питĕрсе тăрассĕ тесе шутланă. [illegible] Одесса [illegible] танксем [illegible].

Çак кунсенче Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем артиллери хăватлан персе хатĕрленĕ хыççăн Перекоп перешейекĕнче Сивашăн кăнтăр çыранĕнче наступлени пуçласа янă. Перекоп перешейекĕ [illegible] Крыма кĕрсе [illegible] тăшман [illegible] оборони [illegible].

[illegible]

Сурсĕрти флотăн сывлăш-çар вăйĕсен летчикĕсем тăшман судниесен караванне курнă. Пирĕн торпедăсем ярăкан катерсен ушкăнĕ, 3-мĕш рангри капитан Коршунович командир пулса ертсе пынипе, тинĕсе тухнă та тăшман карапĕсене хăваласа çитнĕ. Пирĕн çав катерсем тăшман караванне атакăланă та 6.000 тонна таякан суднине тата хуралта çӳремелли карапне шыва путарнă.

Совет Союзĕн Геройĕ Сапожников юлташ Шупашкарта

Нумай пулмасть пирĕн земляк, Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Александрович Сапожников юлташ Шупашкара килчĕ. Столицăри ĕççыннисем — предприятисенчи рабочисемпе служащисем, инженерно-техникла работниксем тата вĕренекенсем Тăван çĕршывăн паттăр ывăлне тулли кăмăлпа хисеплессĕ. Сапожников юлташ пĕр заводри рабочисем патĕнче пулчĕ. Герой пынă ятпа заводра митинг пулса иртрĕ. Унта Сапожников юлташ рабочисене хăйĕн фронтри ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Митинга пухăннисем унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Геройа саламласа тухса каланă сăмахсенче вĕсем фронта тавăх та ытларах пулăшассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулчĕç.

Сапожников юлташ 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен хĕрачасем патĕнче пулчĕ тата вĕренекенсемпе Пионерсен çуртĕнче тĕл пулса калаçрĕ. Вĕренекенсем хамăрăн паттăр землякăн ĕçĕсемпе хытă интересленеççĕ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Шăхасан МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем, специалистсемпе служащисем, пĕтĕм Чăваш республикинчи колхозниксем пекех, пирĕн республикăна 1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми панишĕн чĕререн савăнаççĕ. Çак награда пире ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Иртнĕ çул пирĕн МТС, государство заданине пур енчен те ăнăçлăн пурнăçласа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Эпир кашни 15 лаша вăйлă тракторпа 423 гектар сухаларăмăр. МТС-ри 12 бригада çулталăкри плана иртерсе тултарчĕç. Тимофеев юлташ ертсе пыракан бригада калама çук чаплă çитĕнӳсем турĕ, вăл плана 170 процент тултарчĕ тата 3.000 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çавăн пекех Черновпа Филиппов юлташсен бригадисем те мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç, вĕсем çулталăкри плана 137—148 процент тултарчĕç тата 1700—2000 килограмм горючи перекетлерĕç. Трактористка Нина Иванова юлташ СТЗ тракторпа 157 гектар сухалас вырăнне 264 гектар сухаларĕ, 773 килограмм горючи перекетлерĕ. Тракторист Павел Макаров юлташ, задание 213 процент пурнăçласа, 830 килограмм горючи перекетлерĕ, А. Северов юлташ плана 214 процент тултарчĕ, 761 килограмм горючи перекетлерĕ. Пирĕн МТС-ри 75 тракторист хăйсен планĕсене пĕтĕмпех е иртерсе тултарчĕç. Иртнĕ çул çак çитĕнӳсене туни пире кăçал унтан лайăхрах ĕçлеме май парать, мĕншĕн тесен эпир тракторсене лайăх тата вăхăтра юсарăмăр, кунсăр пуçне тата пирĕн работниксен ĕçри опычĕ те халь пысăкрах.

Пирĕн МТС-ăн çитĕнĕвĕсем, чăн малтанах, тракторсемпе машинăсене вăхăтра та лайăх юсанинчен, ĕçе тĕрĕс организациленинчен килчĕç. Пирĕн тракторсем нихăçан та пушă çӳремеççĕ, çапла эпир 2690 килограмм горючи перекетлерĕмĕр. Тракторсемпе тата машинăсемпе тĕрĕс усă курни, горючие перекетлени трактор ĕçĕсен хакне чакарать. Пĕр гектар çĕре тракторпа ĕçлессин хакне эпир пĕлтĕр 31 тенкĕ те 25 пусран 28 тенкĕ те 60 пуса çити чакартăмăр.

Паллах, вăрçă вăхăтĕнче йывăрлăхсемсĕр пулмасть. Пирĕн трактористсемпе механиксем çав йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлчĕç. МТС кăçал тракторсен кивĕ пайĕсене 19.500 тенкĕлĕх çĕнетсе юсарĕ.

Пирĕн тракторсемпе машинăсем çуракине пур енчен те хатĕр. Тракторсене юсанă хыççăн государство комиссийĕ вĕсене пурне те йышăнчĕ. Бригадăсенче ĕçе пĕлекен трактористсенчен йĕркеленĕ.

Пирĕн умри задача — çак кунсенче тракторпа ĕçлемелли планăн пысăкăшне, тракторсем хăçан ăçта пулмаллине, ĕç нормине, горючи мĕн чухлĕ расходламаллине тата тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса усрассин графикĕпе кашни бригадăна тата тракториста паллаштарасси. Ку ĕçе эпир ăнăçлăн пурнăçлăпăр.

1944 çулта эпир 15 лаша вăйлă кашни тракторпа 450 гектартан кая мар сухалама, «Коммунар» комбайнпа 150 гектартан кая мар вырса пухма тата кашни молотилкăпа 600 тонна тĕштырă çапма обязательство илетпĕр. Тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе тата уйхир ĕçĕсен пысăк пахалăхĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешсе, эпир кăçал та пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр аларах хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса, фронтри пек ĕçлĕпĕр.

Н. КОНСТАНТИНОВ,
Хĕрлĕ Ялавлă Шăхасан МТС-ĕн директорĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи, Вăрăм Хăвари «Хунав» колхозăн конюхĕ А. С. Мышкова юлташ. Вăл хăй пăхакан лашасене пĕтĕмпех çуракине тухма хатĕрленĕ.

П. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Ответлăха туйман çĕрте

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çуракине тухасси инçе юлмарĕ. Анчах та хăшпĕр колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халĕ те çителĕклĕ ĕçлемеççĕ-ха. «Коммунар» колхозра (председателĕ Зайков юлташ) çуракине хатĕрленес ĕç сӳрĕккĕн пырать. Вăрлăхсене сортласа çитермен. Ясмăк вăрлăхне 6 центнер, хуратул вăрлăхне 10 центнер сортламалли юлнă. Уя тислĕк тăкас тĕлĕшпе те начар ĕçлессĕ. Витере пухăннă тислĕке ял варрине сапаласа тăкаççĕ. Колхоз председателĕ Зайков юлташ çакна курмасть.

— Эсир тислĕке мĕншĕн уя тăкмастăр? —тесе ыйтсан,—вăл колхоз тислĕкĕ мар, ăна колхозниксем çунашкасемпе турттарнă, тесе суйма пăхать. Анчах унăн суйи тăрă шыв çине тухрĕ. Колхозниксем хăйсен тислĕкне картишĕнчех купалассĕ.

Колхоз çуракине иртерме ĕç планĕ те тĕплĕн туса хатĕрлемен. Ĕç планне ячĕшĕн çеç тукаланă, унта вăрă çуракине 27 кунта вĕçлеме палăртнă.

Савнашкалах «Победа» колхозра та (председателĕ Голубев юлташ) çуракине начар хатĕрленеççĕ. Ку колхозăн 32 центнер вăрлăх çитмест. Пăри, ясмăк вăрлăхĕсене лайăх сортламан, шăтаслăхне тĕрĕслемен. Колхозăн 150 лав фекали, 2.361 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, фекали нимĕн чухлĕ те хатĕрлемен, тислĕк 370 лав çеç кăларнă. 50 центнер çĕрулми тăрри касса хатĕрлес вырăнне 5 центнер кăна хатĕрленĕ. Плугсене юсаса пĕтермен.

Çак асăннă колхозсен руководителĕсем фронтпа çĕршыв умĕнчи ответлăха халĕ те туймаççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

КАЛИНИНО. Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăхлăх тырă парса пулăшаççĕ. «Социализм» колхоз «Молния» колхоза 5 центнер, Мичурин ячĕпе тăракан колхоз «Победа» колхоза 5 центнер вăрлăх парать.

В. ЗАЙЦЕВ.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

КАВАШ. Районра чылай колхозсенче вăкăрсемпе тата хĕсĕр ĕнесемпе ĕçлеççĕ.

Катекри Киров ячĕпе тăракан колхозра 16 вăкăр кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ. Вăкăрсене вĕрентес ĕçре уйрăмăнах Васильев колхозник тăрăшса ĕçлет.

Çавăн пекех Пăхăртан—Татмăшри «Динамо» колхозра 7 вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ. Ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсемпе ферма валли утă-улăм турттараççĕ, тислĕк тăкаççĕ. Колхозниксем вăрмантан хăйсем валли вутă турттараççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ те, кӳршĕри колхозра вăкăрсемпе усă курнăран, çак кунсенче 5 вăкăра ĕçе вĕрентме тытăнчĕ. «Париж Коммуни» колхозра 3 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Анчах та «Чуваш ЦИК», «1-ое мая», «Малалла», Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем вăкăрсене ĕçе вĕрентме шутламаççĕ-ха.

Т. ТУРХАН.

Кĕрхи калчасене апат пама тытăнчĕç

КАЛИНИНО, апрелĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри уйрăм колхозсем юр айĕнчен тухнă кĕрхи ырашпа тулă калчисене апат пама тытăнчĕç. Паян Услапари «Броневик» колхоз 20 гектар çинчи ыраш калчине кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тата тислĕк шывĕпе апат пачĕ, çавăн пекех Кăкшăмри «Знамя труда» колхозра та 5 гектар çинчи кĕрхи ыраш калчине кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантарнă.

Кĕрхи калчасене апатлантарма районри ытти колхозсем те фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Ку ĕçе ыран-паянах пурнăçлама хатĕр тăраççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Çураки умĕн

☐ ШĂХАСАН. Киров ячĕпе тăракан колхоз пахча-çимĕç вăрлăхĕсене кӳршĕри колхозсене сутмалăх та хатĕрленĕ. Халĕ колхозăн купăста вăрлăхĕ 22 килограмм, кишĕр вăрлăхĕ 60 килограмм, кăшман вăрлăхĕ 80 килограмм, хăяр вăрлăхĕ 10 килограмм, помидор вăрлăхĕ 4 килограмм пур.

☐ ЕЛЧĔК. „Ким" колхоз иртнĕ çулта пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илнĕ. Çакăншăн колхоза 60 мăшăр калуш панă. Калушсене кок-сагыз ĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕ колхозниксемпе уйхир бригадирĕсене панă.

☐ ЙĔПРЕÇ. „Красный фронтовик" колхоза кăçал вăрлăхлăх 146 центнер çĕрулми кирлĕ. Колхозăн çакăн чухлĕ çĕрулми çуккине шута илсе, колхозниксем хăйсем çиекен тата фермăра расходлакан çĕрулмин тăррине касса 75 центнер вăрлăх хатĕрленĕ.

☐ КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. „Красное Сормово" колхозăн тимĕрçи — тăван çĕршывăн патриочĕ А. Филиппов юлташ — колхозăн вăрлăх фондне 100 пăт тырă кивçен панă.

☐ ИШЛЕЙ. „Янду" колхозĕнчи колхозница Ирина Даниловна Данилова юлташ, 55 çултискер, хăйĕн колхозне кивçен 37 пăт тырă вăрлăхлăх панă. Данилова юлташăн 3 ывăлĕ фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ.

☐ КОМСОМОЛЬСКОЕ. „Комбайн" колхоз членĕсем государствăна фронтовиксем валли 166 килограмм купăста типĕтсе панă.

☐ ШĂХАСАН. МТС-ри механиксемпе трактористсем кăçал тракторсен кивĕ пайĕсене 19.500 тенкĕлĕх çĕнетсе юсанă.

☐ ÇĔРПӲ. Аслă Тугальри „Большевик" колхоз членĕсем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене 4 лаша, 3 ĕне тата 3 сурăх янă.

АГРОТЕХНИКА КĔТЕСĔ

Кĕл—паха удобрени

Кĕл составĕнче калий, фосфор тата известь пур, çавăнпа та ăна калийно-фосфорнăй тата известковăй удобрени теççĕ. Йывăç кĕлĕнче калий вăтамран 6—10 процент, фосфор — 2,5—3,5 процент, известь — 30—35 процент; улăм кĕлĕнче: калий—20 процент, фосфор — 5 процент, известь — 10 процент. Кĕл составĕнче азот кăна çук, ӳсентăрана кирлĕ ытти япаласем—микроэлементсем унта пурте пур темелле. Çав микроэлементсем пулмасан, ӳсентăрансем час-часах тĕрлĕ чирпе чирлеме пултараççĕ. Кĕл çинче микроэлементсем пулни унăн пахалăхне ӳстерет. Çавăнпа та кĕл калиллĕ, фосфорлă тата известлĕ ытти удобренисенчен нумай пахарах пулса тăрать. Кĕлри калий çемçе, вăл часах ирĕлме пултарать. Çавăнпа та кĕле çĕре сапиччен типĕ вырăнта усрамалла. Шыв анакан вырăнта усрасан, вăл хăйĕн пахалăхне çухатать. Кĕлпе çĕрулми е сахăр кăшманĕ лартмалли вырăна çемĕçтерни те питĕ усăллă. Кĕле кирек мĕнле çĕре те тата пур тĕрлĕ культурăсем айне те сапма юрать. Кĕл çинче известь нумайăшне пула, унпа йӳçсе тăракан çĕре çемçетни питĕ усăллă. Кĕлпе çемĕçтернĕ çĕр çинче пур тĕрлĕ ӳсентăрансем те лайăх çитĕнеççĕ. Кĕл çинче фосфор пурри пире фосфорлă удобренисене тăкассинчен хăтарать. Çапла вара кĕл тăкнипех эпир, çĕре калий, фосфор тата известь парса, вăрçă вăхăтĕнче тупма йывăр удобренисĕр пурăнма пултаратпăр. Çавăнпа та кĕл пухасси паха ĕç пулса тăрать. Кĕле тислĕкпе тата ытти органически удобренисемпе пĕрле сапсан, вăл çĕрĕн сиелти сийне лайăхлатас тата тырă тухăçне хăпартас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнать.

Пирĕн республикăри Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Сĕнтĕр районĕнчи «Авангард», Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче сăнаса пăхнă тăрăх, гектар çине 6—8 центнер кĕл тăксан, гектартан 10—20 центнер çĕрулми ытларах пухнă, фосфорит çăнăхĕпе пĕрле тăкнă хыççăн 49,4 центнер ытларах пухса илнĕ.

Кĕл сĕлĕ, тулă, пăрçа, ясмăк, вика, клевер, люцерна тухăçлăхне те нумай хăпартать. Элĕкри сортлă тырăсене ĕрчетекен государство станцийĕн данниĕсем тăрăх та кĕл тырă тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăннине курма пулать. Ку опытсене йӳçсе тăракан шурлăхлă вырăнсенче тунă. Кун пек çĕр çинче ыраш, сĕлĕ, пăри тата ытти хăшпĕр тырăсене кĕл тăкнă хыççăн гектартан 30—40 центнер таранччен туса илнĕ, çав вăхăтрах тулă, пăрçа, вика тухăçĕ кашни çулах чакса пынă. Клеверпа кĕрхи тулă час-часах сайралса пĕтнĕ. Çак вырăнта сортоучасток çĕре известь сапма кирлине пĕлнĕ, çавăнпа та пĕр гектар çине 8 центнер фосфорит çăнăхĕ тата 3 центнер кĕл тăкнă. Юр кайса пĕтнĕ-пĕтмен шăнран ирĕлмен çĕр çине тата 9 центнер кĕл тăкнă. Çакна пула вара çакăнта тухăççăр тырăсем аван ӳсме пуçланă. «Лютесценс» ятлă кĕрхи тулă гектартан 27 центнер, пăри —32,5 центнер, пăрçа — 23 центнер тухнă, вăрлăхлăх вика 32 центнер, утăлăх вика гектартан 70 центнер тухнă.

Кĕл тырă тухăçне пĕр çул кăна хăпартмасть, унăн усси 3—4 çула ытла пырать. Йусуçаврăнăшĕ вăхăтĕнче акса илекен тырпулпа курăксен тухăçлăхне тĕштырă шучĕпе шутласан, çав тухăçлăха вăл 5 центнера çити хăпартать.

Клевер, çĕрулми, чĕкĕнтĕр, махорка, купăста тата кĕрхипе çурхи тулă туса илекен вырăнсене кĕлпе çемĕçтерсен ытларах усăллă. Кĕле çĕр çине тикĕс сапмалла. Ку ĕçе çилсĕр, лăпкă кун тусан аван. Е ăна çĕрнĕ тислĕкпе хутăштарса сапмалла, унтан вара сухаламалла. Калиллĕ удобрени вырăнне сапнă чухне гектар çине ыраш улăмĕн кĕлне 4—5 центнер, йывăç кĕлне 6—7 центнер сапмалла. Фосфорлă удобрени вырăнне сапнă чухне ăна икĕ хут ӳстермелле, известлĕ удобрени вырăнне сапнă чухне 4—5 хут ӳстерсен те юрать.

Кĕлпе аннăн усă курмалла. Кĕл пирĕн республикăра сахал мар. Ялсенчи кашни кăмакаран çулталăкра 1,5—2 центнер кĕл пухăнать. Çапла вара пирĕн республикăра кашни çулах 20.000 тонна кĕл пухма пулать. Ку шута хуласенче тата тĕрлĕ предприятисенче пулакан кĕл кĕмест. Ăна та шутласан, кĕл тата нумайрах пухăнать.

Кашни килограмм кĕл пире тĕштырă, пахча-çимĕç, тымар-çимĕç ытларах туса илме пулăшать. Кĕлпе кашни колхозăн удобрени вырăнне усă курма тăрăшмалла.

Н. НИКИТИН,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аслă агрономĕ.

Ют çĕршывсенче

Румынире халăх аптăраса хăраса ӳкнĕ

СТАМБУЛ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестран килсе тăракан хыпарсем çакна лайăх кăтартса параççĕ: Румыни влаçĕсем унти пурнăçа йĕркене кĕртме хăтланаççĕ, анчах вĕсен ку ĕçрен нимĕн те тухмасть, мĕншĕн тесен влаçсем хăйсемех çĕр тĕрлĕ распоряжени параççĕ, пĕр распоряженийĕ тепĕр распоряженипе хирĕç пырать. Çапла вара йĕркелĕн тухнă пурнăç пушшех арпашса пырать. Бухарестри халăха уйăх çеçре куçарас ĕç питĕ йĕркесĕр пулса пырать. Фронт çывăхĕнчи районсенчи халăха çĕршывăн шалти районĕсене куçараççĕ. Анчах шалти районсенчи çынсем хăйсем патне куçарса пынă халăха пĕрре те хапăл туса йышăнмаççĕ, вĕсем хăйсем патне куçарса пынă халăха кураймаççĕ, тăшман çине пăхнă пек пăхаççĕ, вĕсене пурăнма хăйсен кил-çуртĕсене кĕртме килĕшмеççĕ.

Румыни влаçĕсем совет Бессарабийĕн халăхне вĕсен аллинче тăракан районĕсене çаратса пĕтерме васкаççĕ. «Куректул» ятлă хаçат чугун çулсен дирекцийĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре Бессарабири кирек-хăш станцирен те Румынине выльăх-чĕрлĕх тата ялхуçалăх продукчĕсем кирек мĕн чухлĕ те турттарса кайма юрать тесе каланă. Румыни хаçачĕсем çĕршыври халăх влаçсене кураймин пулни çинчен, усал хыпарсем анлăн сарăлма пуçлани çинчен тата правительство паракан распоряженисене итлемен пулни çинчен шиклене-сыраççĕ. «Халăха пăтрантаракансене», «хăравçăсене» темĕн чухлех тытса-тыта хупаççĕ. Çакăнпа пĕрлех Румыни хаçат-журналĕсем вырăнти халăха ăса кĕме чĕнеççĕ, хăюллă пулса хăйсене хăйсем чипер тыткалама хушаççĕ.

Шыв айĕнчи вăрçă çинчен Рузвельтпа Черчилль пĕрле пĕлтерни

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 10-мĕшĕнче премьер-министр Черчилль тата президент Рузвельт шыв айĕнчи вăрçă март уйăхĕнче мĕнле пыни çинчен пĕрле çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Март уйăхĕ Германин подводнăй лодкисене хирĕç активлăн кĕрешнĕ уйăх пулнă. Çав подводнăй лодкăсем вĕсем Баренц тинĕсĕнчен пуçласа Инди океанне çитиччен пĕр-пĕринчен инçере тăракан районсенче кĕрешнĕ. Тăшман пире çурçĕрти çулпа Российăна вăрçă хатĕрĕсем яма кансĕрлесшĕн пулса кĕрешнĕ.

Пирĕн суту-илӳ флочĕн çухатăвĕсем пуринчен ытла инçетри тинĕссенче пулнă. Çав çухатусем февраль уйăхĕнчи çухатусенчен пăртак ытларах пулнă пулин те, вĕсем çапах та сахал пулнă, Германин подводнăй лодкисене вара февраль уйăхĕнчи чухлех путарса пынă. Союзниксен суту-илӳ флочĕ лайăхланса, ӳссе пырать, анчах та Германин подводнăй флочĕ чылай пысăк-ха, çавăнпа та шыв çинчи карапсемпе авиацин вĕсене вăйлăн пыра-пыра çапмалла пулать.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Çĕнĕ Зеланди чаçĕсем тăшманăн икĕ тĕреклетнĕ пунктне атакăланă, тăшмана çухатусем кӳнĕ. Тиррен тинĕсĕн çыранĕсем хĕрринчи секторта (тĕп фронтра) союзниксен артиллерийĕ тăшманăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Пур фронтсенче те патрульсем çапăçнă тата артиллери тăшмана персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер те тăшманăн Италири çар объекчĕсене, çавăн пекех тата тăшманăн Югослави çыранĕсем патĕнчи суту-илӳ суднисене, пыра-пыра тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Мркониц-Град хулипе Яйце хули районĕнче тăшмана аркатса тăкнă та Мркониц-Град хулине туртса илнĕ. Тăшмана çынсемпе хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă. Хĕвеланăç Сербире çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем 36 сехет хушши çапăçнă хыççăн Драва шывĕ патне пырса тухнă. Тăшманăнне 300 çынна ытла вĕлернĕ е амантнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри çарĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 10-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, йышлă истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Бельгири тата Франции авиаци завочĕсене тапăннă. Брюссель районĕнчи объектсене çеç 750 бомбардировщик тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Париж çывăхĕнчи Вильнев-сен-Жорж хулине тата Лилль хулине вăйлăн пырса тапăннă. «Москито» йышши бомбардировщиксем Мангейм хули çине (Германи) бомбăсем пăрахнă.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ЯПОНИ ФЛОЧĔН ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка флочĕн операцисем тăвакан вăйĕсем мартăн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче Каролин утравĕсен хĕвеланăç пайĕнчи Палау, Яп тата Болеан утравĕсене тапăннă чухне Японин 29 суднине путарнă, 17 суднине сиенленĕ.

Çав утравсем çинче çар объекчĕсене нумайĕшне çĕмĕрнĕ.

Çĕр çинче тата сывлăшра Японин 160 самолетне пĕтерсе тăкнă, 54 самолетне сиенленĕ.

Америка авиацийĕн çав çапăçусенче 25 самолет тата 18 летчик пĕтнĕ.

Лăпкă океанăн вăтаçĕрти пайĕнче пулса иртнĕ операцисем çинчен США-н Лăпкă океанри флочĕн командующийĕ Нимиц адмирал çапла каланă: çак çĕнтерӳ вăл «тинĕс-çар флочĕн историре тунă чи пысăк çĕнтерӳсенчен пĕри пулса тăрать», тенĕ.

НИМĔÇ САЛТАКĔСЕМ ÇАРТАН ТАРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: вăрçа хутшăнман государствăсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, çартан тарса килсе Берлинра пурăнакан салтаксен шучĕ сахалтан та 60 пин çынна çитет.

Германири лару-тăру

АЧАСЕНЕ «ТОТАЛЬНАЙ ЙĔРКЕПЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕНИ»

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем Германире «тотальнăй йĕркене» мобилизацилени ачасене те чылайĕшне пырса тивнĕ. Çапла, «Берлинер берзенцейтунг» хаçат почта конторинче ĕçлекен икĕ çамрăк ача çинчен статья çырса кăларнă, вĕсенчен пĕри 6 çулта çеç.

Хаçат çапла çырать: çак ачасем «питĕ вăйлă» ĕçлеççĕ, чиновник вĕсен ĕçĕсене тимлĕн сăнаса тăрать, тет.

ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ ĔÇЛЕССИНЧЕН НУМАЙ ÇЫНСЕМ ПĂРĂНАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла нимĕç хаçачĕсем Германире ĕçлеме мобилизацилессинчен пăрăнни тата саботаж вăйлăн сарăлса пыни çинчен хăраса çыраççĕ. Нимĕçсем чылайĕшĕ хăйсен документчĕсене сывлăшран пырса тапăннипе вилнĕ çынсен кĕсъисене чиксе «çухалма» тăрăшаççĕ. Гитлеровецсен «Нейес Винер Тагблат» ятлă хаçачĕ çакăн пирки çапла çырать: çынсене вĕсен тăванĕсем каланă тăрăх çеç вилнисен списокне кĕртмеççĕ. Çын вилни çинчен полицин е «шанма тивĕçлĕ, политика енчен варалланман çынсен», урăхла каласан, гестаповецсен шпионĕсен, каласа памалла, тет.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ПУÇЛĂХĔСЕМ ПРЕСТУПЛЕНИСЕМ ТУНИ ÇИНЧЕН ХЫПАРСЕМ АНЛĂН САРĂЛНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла влаçсем гитлеровецсен аслă чиновникĕсем взяткăсем илсе йăлтах пăсăлса кайни çинчен нимĕçсем хушшинче хыпарсем сарăлнипе хăраса ӳкнĕ. Çакăн пирки «Берлинер берзенцейтунг» хаçат çынсене хăратса çапла çырать: çавăн пек хыпарсем саракансен «ăрлапкиссене питĕрсе лартма» влаçсен çителĕклĕ майсем пур, тет.

АМЕРИКА ÇАРĔН ХИСЕПĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, США çарĕн хисепĕ 7.700 пин çынна çитнĕ, флотри çынсен хисепĕ 3.200 пин çынна яхăн çитнĕ. Флотри çынсен, çав шутра тинĕс пехотин тата çыранри оборона чаçĕсенчи çынсен, хисепĕ сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3.600 пин çынна çитĕ тесе шутлаççĕ. Çар министерстви çапла калать: хальхи хĕçпăшаллă вăйсен йышне чакармасăр тытса тăрас тесен, кашни уйăхрах 75.000 çынтан пуçласа 100.000 çынна çитиччен илсе тămалла тет.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Куславкка районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Н. Ярославцев вăрлăхлăх улăштарма уйăрнă фондран 1.827 килограмм тырра усăсăр салатнă. Çав шутран Ярославцев хăй валли 547 килограмм илнĕ. Çак тырра хаклă хакпа сутса вăл хăй валли сăран пальто тата ытти япаласем те илнĕ. Ярославцевăн киревсĕр ĕçне пула колхозăн акма вăрлăх çитмест.

Çак ĕçсемшĕн Ярославцева арестлесе суда панă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00412 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз